Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 69 (4638) *1998 çулхи июнь (çĕртме) уйăхĕн 19-мĕшĕ, эрнекун* *Палăртнă хакпа.*

## Çĕнни тата усăлли чылай

**Июнĕн 16-мĕшĕнче районта Пенза кĕпĕрнин губернаторĕн пĕрремĕш çумĕ В.И.Флеин ертсе пынипе авторитетлă делегаци пулчĕ.**

Хăнасен тĕп тĕллевĕ агропромышленность комплексне реформăлассин çулйĕрĕпе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессинчи тата çĕр ĕçĕнчи çĕнĕ технологипе, çаплах социаллă сфера ĕçĕпе паллашасси пулчĕ. Делегаци членĕсем сахăр кăшманне французсен технологийĕпе акса ÿстермелли, выльăхсене кăкармасăр усрас меслетсемпе паллашрĕç, сахăр заводĕнче пулчĕç, Тури Нурлатри лаша фермипе паллашрĕç, çаплах культурăпа социаллă объектсемпе кăсăкланчĕç. Делегаци пуçлăхĕ хăй кунта килнипе кăмăллă пулнине палăртса çапла каларĕ: "Пире производствăна, строительствăна аталантарни, çаплах социаллă пурнăç шайне çĕнетни тĕлĕнтерчĕ. Эпир хамăршăн çĕннине тата усăллине чылай палăртрăмăр. Малашне те сире ăнăçлăхсем сунатпăр".

# Куракăсене çулма вăхăт çитрĕ

Йăлана кĕнĕ тăрăх, выльăх апачĕ хатĕрлемелли кампани тытăнас умĕн районти виçĕ кустра ятарлă семинарсем иртрĕç: пĕрремĕш кун "Урняк" тата "Татарстан" хуçалăхсенче, иккĕмĕш кун - кооперативсен Мичурин ячĕпе хисепленекен пĕрлешĕвĕнче. Çак ĕçе пуçланă май пĕрремĕш икĕ хуçалăхра вырăнти условисене шута илсе выльăх апачĕ хатĕрлессин уйрăмлăхĕсене тĕплĕн ăнлантарчĕç, выльăх апачĕ пуçтаракан техникăна кăтартрĕç, Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăхри семинар вара массăлăхпа та, технологи çыхăнăвне практикăра конкретлă кăтартса панипе те палăрса тăчĕ. Çак хуçалăх бази çинче иртнĕ семинара тата мĕнле ăнлантармалла - карнажа - кукуруза пуçне, тырăлăх ÿстернĕскере, шăтăка хурса ăна тивĕçлĕ упранипе ытти ассоциацисемшĕн тĕслĕх пулса тăнипе. Çак паха апат халь те-ха питĕ аван, сыснасен тата ытти выльăх рационĕсенче вăл питĕ тутă хушма апат. Унăн запасĕсем кунта çĕнĕ тухăçчен те çитмелле.

Мичуринецсем, пĕлтĕр те утă запасне çителĕклĕ хатĕрленĕскерсем, кăçал та ăна пуçтарма туслă та йĕркеллĕ пуçăннă. Выльăх апачĕ хатĕрлекен техника кунта, пĕр хире пуçтаръннă, апат хатĕрлекен звено Александр Иванов агроном ертсе пынипе вăй хурать. Çак явапллă тапхăрта хуçалăх кооперативĕсем пĕрле ĕçлени питĕ тĕрĕс.

Семинар вăхăтĕнче районти "Гостехнадзор" инспекцийĕн начальникĕ Р.С.Саттаров кашни техника мĕн ĕçлемеллине, вĕсене майламалли йĕркене питĕ тĕплĕн ăнлантарчĕ. Ку хуçалăхра утă пуçтарнă çĕре хăш-пĕр хуçалăхсенче тахçанах пăрахăçа кăларнă техникăна явăçтарни ырă сăмахсене çеç тивĕçлĕ, вĕсем çынсен ĕçне нумай çăмăллатаççĕ вĕтха. Тĕслĕхрен, кăçал пресс-подборщиксем питĕ кирлĕ пулĕç, мичуринецсем вĕсене илессишĕн хуйхăрмĕç. Сăмах май каласан, район ертÿçисем маркетинг департаменчĕ урлă 12 рулонлă прессем илнĕ, çитес çывăх вăхăтра вĕсемпе пĕтĕм хуçалăхсене тивĕçтерĕç. Вĕсем вара унпа тухăçлă та перекетлĕ усă курмалла. Администраци пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев семинара хутшăннисене кăçалхи выльăх апачĕ хатĕрлемелли кампанийĕн уйрăмлăхĕсене тимлĕх уйăрма хушрĕ. Куракăсене çулассине хăвăртлатмаллине палăртрĕ, мĕншĕн тесен çанталăк шăрăх тăнипе нумай çул ÿсекен куракăсем, уйрăмах костер, ытлашши ÿссе кайма пултараççĕ, çулнă лаптăксене вара минераллă удобренисемпе апатлантармалла, çапла майпа куракăсене иккĕмĕш хут çуличчен ÿсме условисем тумалла. Çав вăхăтрах кивĕ куракăсен участокĕсене кĕрхи культурăсем акма хатĕрлемелле. Кунта вара тепĕр саманта куçран вĕçертмелле мар. Нумай çул ÿсекен куракăсен, уйрăмах люцерна акнă лаптăксем чылай кивелни пăшăрхантарать. Çавăнпа та çав участоксенчи курăка пĕр тăхтаса тăмасăр выльăх апачлĕх çулмалла та çĕнĕрен люцерна акас тесе тăрăшмалла. Ку тĕллевпе хир хĕррипе йăрăмсем суйласа илмелле. Элмет кустĕнчи хуçалăхсем шăп кăна çавăн пек тунă. Мичурин ячĕпе хисеплекен хуçалăхра та ку ĕçе пурнăçлама хатĕр, çумăр çунă хыççăнах вĕсем çак участоксене люцерна акĕç. Ĕçе çакăн пек пурнăçлани чылай енчен усăллă: хир хĕррисем таптанмаççĕ, выльăхсем валли симĕс апат вара хăть хăш вăхăтра та çулса илме пулать. Çавăнпа пĕрлех Юрий Владимирович витаминлă курăк çăнăхĕ хатĕрлекен агрегатсемпе туллин усă курмаллине тата путек милĕкĕ çителĕклĕ чухлĕ хатĕрлемеллине, эмел курăкĕсене пуçтарса типĕтмеллине те палăртса хăварчĕ. Семинарта çак ыйтусене пысăк тимлĕх уйăрчĕç. Путек милĕкĕ çинчен калас пулсан, кунта Юрий Владимирович çак ĕçе хуларан килсе пулăшасса кĕтмесĕр пурнăçлама тытăннă хуçалăхсене тĕслĕх вырăнне илсе кăтартрĕ.

Семинарта çаплах ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн çĕр ĕç пайĕн начальникĕ В.И.Гаврилов тухса каларĕ. Вăл хальхи вăхăтри ыйтусем çинче чарăнса тăчĕ, тĕпрен илсен, кукурузăн речĕсем хушшине кăпкалатас, апатлантарас ĕçе малалла пурнăçламаллине, сахăр кăшманĕн участокĕсене иккĕмĕш хут ĕçлесе хатĕрлемеллине палăртрĕ. Кунта вăл хуçалăхсенче тахçантанпах усă курман, хамăрăн çĕршывра туса кăларнă опрыскивательсене малашне çĕнĕрен майласа ямаллине палăртрĕ, çаплах ертÿçĕсемпе специалистсене выльăх апачлĕх акнă донник анисене тимлĕх уйăрма сĕнчĕ. Семинара хутшăннисене çаплах апатсен пахалăхне куллен тĕрĕслесе тăмалли çинчен асăрхаттарчĕ. Ку тĕлĕшпе "Агрохимсервисăн" куçса çÿрекен лабораторийĕн оборудованине ĕçре кăтартрĕç. Юлашкинчен Ю.В.Терентьев тырпул пухса кĕртме хатĕрленес задачăсем çинче чарăнса тăчĕ.



*Хресченсен хуçалăхĕсен Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕн механизаторĕ Клим Иванович Тихонов ака вăхăтĕнче хире минераллă удобрени турттарнă. Халь вара акнă анасене пăхать: çурхи культурăсене апатлантарнă, кукуруза анин речĕсем хушшине кăпкалатать. Тăрăшуллă механизаторшăн яланах ĕç тупăнать.*

*Ÿкерчĕкре: хресченсен хуçалăхĕсен Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕн механизаторĕ К.И.Тихонов.*

## Йĕркелĕхпе тасалăх - ял Совечĕсен ĕç кăтартăвĕ

Çуркунне пуçламăшĕнчех хула тата район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ Ю.В.Терентьев ертсе пынипе иртнĕ канашлура ялсен санитари шайне лайăхлатасси, ялсене тирпей-илем кĕртесси çинчен çивĕч калаçу пынă. Çакăн хыççăн госсанэпиднадзор центрĕн ĕçченĕсем районти ялсене тухса тĕрĕслевсем иртрессине йĕркеленĕ. Çак тĕллевпе вĕсем 14 ялта пулнă. Вĕсенчен пиллĕкĕшĕнче - Пухтел, Хиртикÿл, Чулпан, Иглаел, Якаел Совечĕсенчи ялсен санитари шайĕ начар пулнине палăртнă. Çавна пула çак ял Совечĕсен председателĕсене явап тыттарнă. Чăнах та, çакăн хыççăн вĕсем ялсене тирпейилем кĕртес тĕлĕшпе çаннисене тавăрса ĕçлеме тытăннă. Иккĕмĕш хут тĕрĕслев иртнĕ чухне вĕсен пурте йĕркеллĕ пуласса шанас килет.

Çакна та палăртса хăвармалла, ялсене тирпей-илем кĕртес ыйтăва халăх депутачĕсен пĕрлештерне Нурлат Совечĕн президиумĕ тĕп тимлĕх уйăрать: Совет председателĕн çумĕ А.Н.Ельченков ялсене тухса ЦГСЭН хушнисене пурнăçланипе пурнăçламаннине хăй тĕрĕслет.

**Паянхи номерте:**

- **Утçи - хĕрÿ тапхăр**
- **Пасар - халăхшăн**
- **Ача - пăча страници**
- **Авторсен çырăвĕсенчен**
- **Реклама. Пĕлтерÿсем.**

## Вăрмана кĕме юрамасть!

Нумай вăхăт хушши типĕ çанталăк тăнипе районти вăрмансенче пушарсем тухас хăрушлăх пур.

Вут-кăвар тухассине сирсе ярас тĕллевпе çумăр çăвиччен граждансене вăрмансене çÿреме, транспорт хатĕрĕсене кĕме юрамасть.

Тутарстан Республикин Кабинечĕ ку енĕпе вăрман хуçалăхĕсене вăрмансенче пушар тухассине сирсе ярас тĕлĕшпе мĕнпур мерăсем йышăнни çинчен "Схема-39" правительство телефонограммине янă.

Пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене пăснисене "Раççей Федерацийĕн вăрманĕсенчи пушар хăрушсăрлăхĕн правилисемпе" килĕшÿллĕн явап тыттараççĕ, унта административлă айăп - уйăхри чи пĕчĕк ĕç укçин çурри чухлĕ штраф хураççĕ. 261-мĕш статьяпа та уголовнăй явап тыттарассине пăхса хăварнă: уйăхри 200 тытăнса 500 çити чи пĕчĕк ĕç укçин виçи чухлĕ штраф хураççĕ е ĕçлесе юсанма 2 çула ăсатаççĕ, е 2 çула тĕрмене хупаççĕ.

Район администрацийĕ халăх хуçалăхне, регионăн çутçанталăк ресурсĕсене пысăк сиен кÿрекен пушарсене сирсе ярас тĕллевпе граждансене вăрмана кĕме хушмасть тата асăрхаттарать: закон нормисене пăснисене хытă айăплĕç.

Вăрмана - пирĕн симĕс пуянлăха упрăр!

**Çу пуçлансан госсанэпиднадзорăн республикăри центрĕ хăвăрт пăсăлакан апат-çимĕçсене урамра, уçă çĕрте сутма юраманни çинчен решени йышăнать. Анчах та пирĕн калаçăва "сезонрисен" разрядне кăна кĕртме çук. Мĕншĕн тесен аш пирĕн сывлăха çуллахи вăхăтра çеç мар, хĕлле те сиен кӳме пултарать. Çаксем çинчен эпир ветеринарипе санитари эксперчĕпе И.ХАБИБУЛЛИНПА калаçнă хыççăн пĕлтĕмĕр.**

Актуаллă

# Хаклăраххи те пахалăхлăраххи лайăхрах

Пирĕн пĕр кун та ашсăр иртмест. Укçа çук тесе ӳпкелешекен туссемпе тăвансене час-часах тĕл пулатпăр, çапах та вĕсем мĕнле те пулин апат-çимĕç туянма кашни эрнере пасара утаççĕ. Вегетарианецсем пирĕн патра сахал ĕнтĕ - пĕрре-иккĕ, урăх çук та. Эпир вара тин кăна пуснă тата çулăрах аш суйлатпăр. Палланă çынсем ялтан йӳнĕрех хакпа аш сутма килнине пĕлсен вара, вĕсенчен кăмăла килекен пысăкрах татăксене туянма тăрăшатпăр.

- Ку вара, паллах ĕнтĕ, тĕрĕс мар, - тет манпа калаçакан. - Эсир хăвăра тата çемйĕре мĕнле хăрушлăха кĕртетĕр...

Аш, пысăк калориллĕ апат шутланнине пăхмасăр, ăна çисен сальмонеллезпа, трихинилезпа тата ытти чирсемпе те чирлеме пулать.

Пахалăхĕ начар апат-çимĕç çинипе чирленĕ тĕслĕхсене пирĕн патра та кашни çул регистрацилеççĕ. Çавăнпа та аш пасарта çеç туянмалла. Мĕншĕн?

Мĕншĕн тесен, çӳлĕк çине сутма хуриччен, ăна ветсанэксперт лабораторийĕ анализ тăвать. Микроскопи, оргонолептика, биохими анализĕ ирттереççĕ. Юлашкине пуснă чухне выльăх мĕнле шайра пулнине палăртаççĕ, çапла майпа, ирĕксĕрех пусма тӳр килнĕ аша нихăçан та суттармаççĕ. Лабораторире выльăхсен ăш-чик органĕсене тата ыттисене тĕрĕслеççĕ. Çавăн хыççăн кăна сутма ирĕк парса клеме çапаççĕ.

Çапла майпа, пасарта эпир паха та çиме юрăхлă продукт туянатпăр. Паллах ĕнтĕ, урăх çĕрте, уйрăм çынсенчен илнĕ аша çакăн пек анализ тумаççĕ. Хуçалăха кирлĕ чухне пуснă аш тӳшкисене юрать-ха выранти ветеринари врачĕ тĕрĕслет. Сутма ирĕк паман, тĕрĕслемен аш - ку тавар туянакансен чи пысăк йăнăшĕ.

- Сутасси те! - хушса хурать И.Хабибуллин, унтан вара чи çивĕч тема çине куçать.

Чи малтан ку хуçалăхсем уява илсе килекен продукцие тивет. Ялта пурăнакансем хуларисен сĕтелĕсене пуянлатас тесе тăрăшнине, паллах ĕнтĕ, ăнланма пулать. Анчах та аш тӳшкисенчен чылайăшĕ ветеринарипе санитари экспертизине иртменни хумхантарать. Тĕрĕс, çак правилăсене пăсман хуçалăхсем пур. Кусем хресченсен хуçалăхĕсен "Рассвет", Хафизов ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕсем, вĕсем сутиччен малтан аша яланах тĕрĕслеттереççĕ. Хăйсем те лăпкă, тавар туянакансем те хумханмаççĕ. Анчах та чылай хуçалăхсем кун пирки хуйхăрмаççĕ, сутмалли аша пакетсене йĕркеллĕ майласа хурса илсе тухаççĕ. (Тивĕçтерӳ культури çӳлĕ шайра тесе эсир кун пек чухне ан улталанăр). Ярмăрккăра аш туянакан хула çыннисене эпир сĕнесшĕн: туяниччен малтан сутуçăран сутма ирĕк панă документ е клеме кăтартма ыйтăр. Вĕсем унăн пулмасан сирĕн унтан пăрăнса кайсан лайăхрах пулĕ... Мĕншĕн тесен ирĕксĕр пусма тивнĕ выльăх ашне пасарта сутнă тĕслĕхсем сахал мар. Хуçалăх ертӳçисене те çапла калас килет: эсир çынсемшĕн ырă ĕç тăвас тетĕр пулсан, вĕсен кăмăлне ан пăсăр - аша ветсанэкспертиза ирттерĕр.

**Ку публикаципе эпир пире итлеменнисене те, лайăх ĕçлесе хатĕрлесен нимĕн те пулмасть текеннисене асăрхаттарас тетпĕр. Ан тив, туяннă продукт сире чăрмав мар, киленӳ çеç кӳтĕр.**

С.НУРУЛЛИНА.



***Наиль Шамилевич Фатхутдинов нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленин олифа тата сăрă туса кăларакан цехра ăна йĕркеленĕреннех вăй хурать. Вăл Самар хулинчи ятарлă курсра вĕреннĕ, çавăнпа та технологи вăрттăнлăхĕсене питĕ лайăх чухлать, хăйне пăхăнса тăракансемпе те пĕр чĕлхе тупма пултарнă. Цеха Пӳлерти сăваплă шыва пластика бутылкăсене тултарма хушсан, Наиль Шамилевич тырă авăртакан операторпа Фидель Вагизович Зяляловпа вăхăтлăха çав участока куçнă. Кунта вĕсем Мускавран килнĕ специалистсемпе пĕрле шыв тултармалли технологие алла илнĕ. Çак çĕнĕ ĕçĕн вăрттăнлăхĕсене кĕске вăхăт хушшинче вĕренсе, вĕсем çĕнĕ участокра тăтăшах ĕçлекен Марина Баймечевана пулăшнă. Халь яшсем каллех хăйсен тĕп специальноçĕпе вăй хураççĕ, вĕсем Сăваплă ту çинче ĕçленĕ кунсене час-часах аса илеççĕ.***

*Н.Квашнина сăнӳкерчĕкĕ.*

# Уяв питĕ чаплă иртрĕ

Пирĕн ялти Акатуй çуркуннехи хирте вăй хунă çĕр ĕçченĕсен ячĕпе ялав çĕкленинчен пуçланчĕ. Çамрăк мулла Магсум хазрет Тагиров кĕлĕ вуларĕ. Самоуправленин вырăнти Совечĕн тата хресченсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕн председателĕсем пуçтарăннисене уяв ячĕпе саламларĕç. Р.С.Хамидуллин ака вăхăтĕнче тăрăшса ĕçленисене тав турĕ, çав вăхăтрах вăл уяв хыççăнах утă çулма тухмалли çинчен те аса илтерчĕ.

Акатуй шавлă та савăнăçлă иртрĕ. Кашни вăйăра, ăмăртура çĕнтерӳçĕсем парăрчĕç. Акатуй паттăрĕ тата чи хаклă парнене тивĕçли Ильгиз Сафиуллин пулчĕ.

Акатуя хутшăннисене районти культура çуртĕнчи Сабит Миниханов ертсе пыракан пултарулăх артисчĕсем савăнтарчĕç.

Хумаел ялĕнче пурăнакансем уявпа питĕ кăмăллă пулчĕç.

Х.ШАФИГУЛЛИНА.
Хумаел ялĕ.

# Шанчăклисем

- Мĕнле шутлатăр, ялти масар картине юсама вăхăт мар-ши, - терĕ нумаях пулмасть хресченсемпе фермерсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕн пуçлăхĕ И.Н.Мухамметов В.В.Николаев пенсионерпа курнăçсан.

- Масар картине тытни çирĕм çул та ытла, çак вăхăтра вăл юхăнма пуçланă, хăш-пĕр тĕлте юпасем тайăлнă, шăтăрнак хăмисем хуçăлнă. Картана юсама вăхăт çитнĕ тесе шутлатăп, - хуравларĕ Владислав Васильевич.

- Çак ĕçе тума пенсионерсем хутшăнма пултарĕç-ши?

- Ним иккĕленмелли те çук...

- Эсир - шанчăклисем... Сире эпĕ шанатăп.

- Çак масарта - пирĕн атте-аннесем, асаттеасаннесем, тăвансем, кӳршĕ-аршăсем, тустантăшсем... Тӳррипех каласан, пурсăмăр та масарта, хура тăпра айĕнче тăнăçлăх тупмалла... Кам маларах, кам каярах. Кам ватăлса, кам çамрăкла... Питĕ шел, нумайăшĕ çамрăкла.

- Владислав Васильевич, ялта эсир паллă, хисеплĕ çын. Сирĕн сăмахăр витĕмлĕ. Пенсионерсемпе сăмах хушса пăхăр-ха, тен, вĕсем масар картине юсама хирĕç пулмĕç...

- Ильяс Нургалеевич, тӳрех калатăп: ку ĕçе пирĕн халăх, çаплах пенсионерсем те, хаваспах хутшăнĕç. Мĕншĕн тесен хăмăшлăсем - шанчăклисем.

Июнь (çĕртме) уйăхĕ. Лăпкă кун. Тӳсме çук шăрăх. Çумăр пуласси пăхса та курăнмасть. Çак асаплă вăхăтра, пĕр кун 63-68 çулхи пенсионерсем пĕр шухăшлă пулса масар карти юсама пуçăнчĕç. Вĕсен шутĕнче çамрăк чух шахтер, каярахпа яла таврăнса 30 çул ытла столяр пулса ĕçленĕ Аркадий Емельянович Иванов, Владимир Иванович Степанов платник, лашасем пăхнă Иван Гаврилович Ермолаев, пенсие тухиччен киномеханик, шофер, тракторист пулнă Илья Евгеньевич Кузьмин, истори учителĕ, шкул директорĕ пулса ĕçленĕ Владислав Васильевич Николаев, Кирилл Иванович Герасимов сварщик, тракторист тата тимĕрçĕ пулса ĕçленĕ Ной Дмитриевич Егоров, нефтяниксен ушкăнĕнче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă Илья Пименович Краснов. Çак пархатарлă ĕçе тунă çĕрте пенсионерсемпе пĕрле икĕ çамрăк: Василий Ивановпа Юрий Тимофеев вăй хураççĕ. Ĕç ăстисем аксакалсем хушшинче хăйсене ула курак чĕпписем пек туймаççĕ, вĕсемпе пĕрле, пĕр тан, килĕштерсе ĕçлеççĕ.

Ĕç кал-кал пырать. Çак материал хаçатра пичетленсе тухнă вăхăта хавхаланса ĕçлекенсем масар картине юсаса та пĕтерĕç. Вĕсене шанма пулать. Вĕсем - хăмăшлăсем - шанчăклисем.

В.ЕФРЕМОВ.
Вăтам Хăмăшлă ялĕ.

# Апат-çимĕç пасарĕ: тĕп тимлĕхре

Хулари апат-çимĕç пасарĕн уçă çӳлĕкĕсем çинче кăлпасси, вакуум чĕркемĕнчи сосискăсем тата краб ашĕ курăнманнине пурте асăрханă пулĕ. Сăлтавĕ кунта çынсем вĕсене туянманнинче мар, курттăмăн сутакан складсемпе базăсенче те вĕсем туллиех. Ваккăн суту-илӳ тăвассин требованийĕсем вара чылай ӳснĕ. Çапла, çу çитни апат-çимĕç сутуçисемшĕн çĕнĕ йывăрлăхсем кăларса тăратрĕ. Майăн 14-мĕшĕнче ТР Госсанэпиднадзорĕнче "Апат-çимĕçе ваккăн сутассине йĕркелессипе йышăнмалли мерăсем çинчен" калакан питĕ кирлĕ документа алă пуснă. Унпа килĕшӳллĕн июнĕн 1-мĕшĕнчен сутуçăсен чăх пĕççисем, кăлпасси, пулă, майонез, сыр, шоколад, çаплах пĕрчĕллĕ продуктсем - çăнăх, сахăр песокĕ, çăнăхран тата сахăртан туса кăларнă кондитер изделийĕсене ваккăн виçсе чĕркесе те, тӳрех виçсе те сутма юрамасть. Сĕт те сутма юрамасть. Çаксем пурте сывлăш температури 20 градусран çӳлĕрех условисенче. Хĕлле эпир хăрамасăр туянакан хăвăрт пăсăлакан продуктсемпе апат-çимĕç чĕртаварне сивĕтекен çӳлĕксемпе, шкапсемпе тивĕçтернĕ суту-илӳ залĕсенче, павильонсенче, киосксемпе ларексенче сутма ирĕк параççĕ. Çапла майпа, çуллахи шăрăх çанталăкра туяннă тавар пахалăхлă пулнине шанма пулать.

Нурлатри ЦГСЭН врачĕсем çак требованисене тĕпе хурса, вĕсене пăхăннине çирĕп тĕрĕслеççĕ. Пасарта, кашни кун тенĕ пекех, тĕрĕслевсем ирттереççĕ. Врачсем каланă тăрăх, халь уйрăмах пыршă чирĕсенчен тата апат-çимĕçпе наркăмăшланассинчен сыхланмалла, ку мерăсене пурне те çыннăн сывлăхне сыхлас тесе йышăннă. Пĕçернĕ кăлпасси шăрăх çанталăкра икĕ сехет хушшинче пăсăлма, майонез йӳçĕхме пултарать, ку чирпе чирленине Раççейре сиплеме вĕренеймен-ха. Пĕрчĕллĕ продуктсем çил тухсан самантрах тусан айне пулаççĕ, çакă ботулизм чирне аталантарма пултарать. Пире, вулакансене, ку кирлĕ-и вара?

Пирĕн пасарти сутуçăсем çĕнĕ правилăсене ăнланнă пулас, тĕрĕслекенсемпе хăйсене лăпкă тытаççĕ. Хăйсене лайăхрах пулать вĕт. Эпир суту-илӳ речĕсене пăхса çаврăннă ир вĕсем санитари врачĕн требованийĕсемпе пурте килĕшрĕç. Е.Захарова сутуçă çӳлĕксем çине консервсем, соуссем, майонез кăлармасть - пĕлет, юрамасть. Л.Кадыровапа Р.Ишимбаева тата ыттисем те çĕнĕ требованисем çинчен пĕлеççĕ. Кушкăри О.Яфанова, тĕпрен илсен, пахчаçимĕçпе улма-çырла сутать, Р.Абдулазянова та çакăн пек таварсене сутасси çине куçасшăн тет. ЦГСЭН ĕçченĕсем çаплах хальхи вăхăтра урамра суту-илӳ тăвакан ытти атрибучĕсемпе интереслеççĕ: лицензипе, пахалăх сертификачĕсемпе, хăйĕн медицина карточкипе, ятарлă тумтирпе, кăкăр çине çакмалли фирма паллипе, чĕркемелли материалпа тата суту-илӳ тумалли хатĕрсен шайĕпе.

Требованисене пăсакансене, паллах ĕнтĕ, айăплĕç. Ку тĕлĕшпе госсанэпиднадзор центрĕн практика пур: пасарта суту-илӳ тумалли санитари нормине пăснăшăн кăçал штраф панă 30 постановлени йышăннă, тăватă çынна вара ĕçрен хатарнă.

- Ку тĕлĕшпе пирĕн политика улшăнмĕ, тĕрĕслевсем вара куллен пулĕç, - тет Нурлат районĕнчи ЦГСЭН тĕп врачĕ И.В.Андаров. Ӳсĕмсем пур. Администраци пуçлăхĕн постановленийĕсемпе килĕшӳллĕн апат-çимĕç таварне пĕлтĕртенпе уйрăм пасарта сутаççĕ, урамсенче хăйсем тĕллĕн пулса кайнă суту-илӳ точкисене хупрĕç. Налук инспекцийĕн, администрацийĕн, милици ĕçченĕсемпе пĕрле 29 рейд ирттернĕ, унсăр пуçне ваккăн сутакан 89 объекта тĕрĕсленĕ. Юлашки мерăсем çинчен калас пулсан вара... Ăнланăр, шăрăх кунсем тăраççĕ - лотоксенчен хăвăрт пăсăлакан продуктсем сутма юрамасть. Çынсем хăйсен сывлăхне сиенлетме пултараççĕ вĕт-ха. Уйрăмах пуçарullă сутуçăсем лицензи илмесĕрех ялсенче çӳреççĕ, сертификацилемен тата суту тума юраман продуктсем унта сутаççĕ. Ялсенчи власçем, вырăнти çеç пулнине пăхмасăр, кун пек фактсем умĕнчен лăпкăн иртсе каймалла мар.

Пасарти суту-илӳре йĕрке пулсан, тавар илекеншĕн ку усăллă çеç. Пасарта ялан йĕрке пулмалла. Вăл пирĕншĕн вĕт, эпир уншăн мар.

Т.АЛЕКСЕЕВА.

# Ача-пăча страници

## Юмах çыратпăр хамăрах

### *Итлемен чăх чĕппи*

*Пĕр карчăкпа старикĕн пĕр автанпа виçĕ чăх пулнă тет. Пĕр чăххин вунă чĕп пулнă тет.*



*Пĕррехинче чăх, чĕпписене юнаса: "Эсир аякка ан кайăр", - тет.*

*Анчах пĕр чĕппи амăшне итлемен. Вăл килкартинчен пахчана тухнă. Ăна курсан, хурăн тураттин çинче ларакан ула курак питĕ хĕпĕртенĕ.*

*- Ну, ку чăх чĕппине çисе яратăп, - тет те вĕçсе анса йăтса каять.*

*Чăх унталла-кунталла пăхкаланă та пĕр чĕппи çухалнине сиснĕ. Пуçне тӳпенелле çĕкленĕ: ула курак ун чĕппине çĕклесе вĕçнĕ.*

*Çапла çав, аслисем каланине итлемесен инкеке лекме пулать.*

***Саша АНДРЕЕВ.***

### *Икĕ така*

*Пурăннă тет карчăкпа старик. Вĕсен пĕр шурă така пулнă тет. Вĕсемпе кӳршĕллĕ тепĕр карчăкпа старик пурăннă тет. Вĕсем те така усранă, анчах таки хура пулнă тет.*

*Икĕ çемье пысăк уявра çак икĕ такаран шӳрпе пĕçерсе çиме шутланă. Çакна сиссен-пĕлсен, такасем çывăхри вăрмана тарнă. Вăрманта икĕ тус çурт лартнă.*



*Вĕсем çинчен кашкăр пĕлнĕ. Вăл такасене çиме шут тытнă. Çакна такасем сиснĕ те кашкăра улталама шутланă. Шур таки сакайне кĕрсе [л]атаннă, хури кăмака айне кĕрсе ларнă. Хăйсем вырăнне вĕсем икĕ тунката хурса хăварнă. Кашкăр килнĕ те, хырăмĕ пит выçнипе тункатасене çăтса янă. Пĕр тункати туратлă пулнă. Мĕскĕн кашкăр ăна аран-аран туртса кăларнă тет. Вăл урăх çак çурта нихçан та килмен тет. Икĕ така вара лайăх пурăнса кайнă тет.*

***Олеся ИВАНОВА.***

## Чутламан йĕркесем

### (Ачасен çырăвĕсенчен)

*Йытă урисемпе пуçне тяпписем çине хучĕ.*

*Телейлĕ Илюш хăлхана ачашласа йăпатакан сăмахсемпе усă курать.*

*Вĕрентекенĕн хытă сăмахĕ кăритура тухса кайрĕ.*

*Эх, питĕ ырă-çке шăрăх çанталăкра! Çырантан шыва шампăрт! чăматăн та, хăвна чĕнинченех унта ларатăн.*

*Хăйне кĕтмен ыйту панипе çухалса кайрĕ те вăл, урăх тупăнмарĕ.*

*Эпĕ хамăн юлташсемпе картишĕнче те, шкулта та вĕренетĕп.*

*Петĕр йытă пирки ĕмĕтленнĕ, анчах ăна овчарка парнеленĕ.*

*Пӳрт хыçĕнче çăмламас çын курăннă, унтан - унăн урисем.*

*Хĕрача сак çине чечексем хучĕ. Вĕсем хăнана каясшăн.*

*Тинĕс лăпкă мар, вăл питĕ тарăхса кайнă та хумханма пуçланă.*

*Лашапа слон шахматри чĕрчунсен шутне кĕреççĕ.*

## Çăм илни

Пĕррехинче мана анне ирех вăратрĕ. Эпĕ шкула каймаллатăр тесе шухăшларăм. Çук иккен, мана вăл çăм илмешкĕн вăратнă. Кăшт вăхăт иртсен инке те килчĕ.



Эпир çăм илме тухрăмăр. Сурăха тытмаллаччĕ, вăл вара манран тарчĕ. Анчах эпĕ ун çăмĕнчен тытрăм, вăл чупма тытăнчĕ. Эпĕ ун хыçĕнчен. Ӳкрĕм, анчах аларан ямарăм, ун хыçĕнчен сĕтрĕнтĕм, чиклесе кайрăм.

Кайран ăна аннепе инке тытса урисене çыхрĕç. Çаратма пикенчĕç. Эпĕ те хачă тытрăм та пулăшма пуçăнтăм. Вĕсем мана мухтама тытăнчĕç, эпĕ çакна итле-итле сурăхăн ӳтне касса та илтĕм. Сурăх сиккелеме тытăнчĕ. Анчах тараймарĕ. Кайран мана аслисем хăваласах ячĕç. Пĕр-ик сехетрен картише тухрăм та виçĕ сурăх яп-яка чупса çӳреççĕ.

**Александр КОЛЕСНИКОВ.**
**Уксăмлăри вăтам шкул, 5-мĕш класс.**

## *Çĕрулми кăларни*

Авăн уйăх варринче.
Çурт хыçри ана çинче.
Сĕрлесе тăраç çынсем -
Çĕрулми чаваç вĕсем.

Тракторпа та кăлараç,
Сенĕксемпе те алтаç.
Ачи-пăчи пуçтарать,
Михĕсене тултарать.

Вара, тулнă миххине,
Йăтать арçын
нӳхрепне.
- Çĕрулми аван тухать! -
Ман кукаçи савăнать.

**Лена УЛАЕВА.**
**7-мĕш класс.**
**Ерепьел ялĕ.**

## Стена хаçатĕнчен илнĕ тупмалли юмахсем

Чипер пиччен тути хупă. *(Урока хатĕрленмен вĕренекен).*

Хир-хир урлă, уй-уй урлă эреветлĕ-теветлĕ "хĕр" çитрĕ. *(Тетрадь çинчи "иккĕ" паллă).*



Мачча çинче алпа ăсталаман ала пур. *(Хăшпĕр класра çакăнса тăракан эрешмен карти).*

Хура вĕрен çинче хĕрлĕ çырла пиçет. *(Вĕрентекен тетрадьре тупнă йăнăшсем).*

Икерчĕк-мăкăрчăк, утмăл икĕ кукăрчăк. *(Хитре мар çырни).*

Вĕрмеççĕ, çыртмаççĕ, çынна кĕртмеççĕ. *(Арçын ачасем урока васкакан хĕрачасене алăкран иртерменни).*

Кĕрлет - çил мар, çунатне сарнă - çерçи мар. *(Коридорта кăшкăрса чупакан ача).*

## Çыру ĕçĕ

### Шӳт

- Ырă кун пултăр. Ларăр! - терĕ Мария Ивановна. - Малтан кĕске кăна çыру ĕçĕ иртерĕпĕр. Пĕр предложенирен кăна тăрать вăл. Халĕ çак ваттисен сăмахне çырăр: "Вĕренни - çутă, вĕренменни - тĕттĕм".

Тĕрĕссипе каласан, унччен эпĕ никамран та çырса илмен. [П]енчен те паян эпĕ "виççĕ" ил[с]ен, анне кулянсах вилĕ. Манăн унăн кăмăлне пăсас килмест.

Кӳршĕ парта хушшинче ларакан Çăпата Валеркинчен пĕрремĕш сăмаха çырса илтĕм: "вĕрени". Анчах вăл тетрадьне чавсипе хупларĕ, çавăнпа та иккĕмĕш сăмахне Курак Натишĕнчен сăптăртăм: "сютă". Виççĕмĕш сăмахне - "вĕременни" Шăпчăк Пурисĕнчен, тăваттăмĕшне - "тĕтĕм" - кӳршĕ партăри Кавĕрле Верукĕнчен.

Çырса пĕтертĕм те тетраде вĕрентекене кайса патăм.

Тепĕр кунхине Мария Ивановна кам мĕнле паллă илнине пĕлтерчĕ:

- Эпĕ пĕлнĕ пекех пулчĕ, - терĕ вăл, - пурте пĕр йăнăшсăр çырнă - "пиллĕклĕх". Тăвată ача - Лаптев, Куракова, Соловьев, Гаврилов - пĕрер йăнăш тунă. Вĕсем "тăваттă" илме тивĕç пулчĕç. Гриша Бобров вара... Тархасшăн, тăр - Эпĕ тăтăм. - Бобров мана тĕлĕнтерсе пăрахрĕ! Çакăн пек кĕске предложенире - тăватă йăнăш! "Иккĕ", Бобров! Лар!

- Мĕнле-ха капла!? - кĕçех кăшкăрса яраттăм эпĕ. - Йăлтах вĕсенчен çырса илтĕм-çке! Халĕ мĕн пулать ĕнтĕ манăн аннепе? Шутлама та хăрушă!

**В.САМОЙЛОВ.**

## Вова Юркин шӳтлет



- Ӳсентăрансене мĕншĕн имçам нумай сапса пама юрамасть? - ыйтать вĕрентекен Вова Юркинран.

- Самăрălса кайма пултараççĕ вĕсем.

* * *

- Вова, килте аннӳне пулăшатăн-и эсĕ?

- Ăхă, пулăшатăп. Ăна чăрмантарас мар тесе, вăлĕç хушсанах çывăрма выртатăп.

* * *

- Юркин, кăшкăру паллиллĕ предложени тупса пар-ха.

- Ур-ра! Вĕрентекен чирлесе ӳкрĕ!

* * *

- Шыв пĕлтерĕшĕ пирки мĕн калама пултаратăн, Вова?

- Шыв пирĕн пурнăçра питĕ кирлĕ. Вăл пулмасан, эпир ишме вĕренейместĕмĕр, путса вилĕттĕмĕр.

* * *

Историпе вĕрентекен Вова Юркинран ыйтать:

- Мĕн вăл шлем?

- Шлем-и? - савăнăçлăн хуравлать Вова, - пуçа тăхăнмалли тумтир.

* * *

- Приставкăпа предложени тупса пар-ха, Вова?

- Кĕтесре магнитофон приставки ларать.

* * *



- Маттур! Задачăна тĕрĕс шутланă эсĕ, Вова, - мухтать Юркина вĕрентекен. - Анчах тĕрĕс шутланине мĕнле тĕрĕслесе пĕлмелле-ха?

- Мĕншĕн тĕрĕслемелле? Тĕрĕс шутланă тесе хăварах калараăр-çке!

* * *

- Асатте, мана çирĕм пилĕк тенкĕ кивçен пар-ха? Пенси илсенех тавăрса паратăп.

- Мĕнле пенсирен, Вова? Эсĕ вуниккĕ те тултарман-ха!

- Асанне илсен.

## Чăхăпа таракан

### (Эстон халăх юмахĕ)

Пĕррехинче, кил хуçи арăмĕ пӳртрен тухнă чух алăка хупмасăр хăварнă. Çенĕк умĕнче кăтиклетсе çӳрекен чăхă çакна асăрханă та пӳрте кĕрсе кайнă. Кăмака çумĕнчи стена çурăкĕнче ларакан таракан, чăхха курса, хаяррăн çапла каланă:

- Эс мĕн туса çӳретĕн кунта?!

- Эп çынсем, ман хуçасем мĕнлерех пурăннине кĕрсе курас терĕм, - пĕлтернĕ чăх.

- Мĕнле çынсем?! Мĕнле хуçасем?! Эп кунта хуçа! Ыттисем - ман тарçăсем! Вĕсем эпĕ мĕн хушнине туса тăраканнисем çеç! - мăн кăмăллăн калаçнă таракан, стена çурăкĕнчен тухса.

- Эс кам пулатăн вара? - тĕлĕннĕ чăх.

- Пăх-ха ăна, эп кам иккенне пĕлмест. Таракан эп! Астуса юл мана, тепĕр чухне вара аякранах палласа илĕн, - тенĕ те таракан хăвăртрах стена çурăкне кĕрсе тарнă.

Чăх таракан ларнă вырăна пырса нумайччен сăнаса тăнă.

- Мĕнлерех? Хăрушăим? - кăсăкланнă лешĕ.

- Питĕ хăрушă, - тенĕ чăххи.

- Вăкăр та ман пысăкăш çук, çапла-и? - хăпартланнă таракан.

- Çапла, çапла, - килĕшнĕ чăх.



- Лашан та ман чухлĕ вăйĕ çук, - мухтанма чарăнман çаплах çурăкри.

- Çук, çук, - пуç ухнă çăмарта тăваканни.

- Пĕлесчĕ сан, тарăхнă вăхăтра еплерех эп хаяр! Кам ман алла лекет - лапчăтса хуратăп, чĕррĕн вĕçертместĕп.

- Кăтик-кăтик! Мĕнле майпа лапчăтатăн-ха?

- Хамăн вăйлă "мăйракасемпе" сĕкетĕп, пĕчĕкреххисене çак тĕреклĕ урасемпе таптатăп, - тенĕ таракан.

- Мĕн çисе çав тери вăй пухнă эс? - пĕлес килнĕ кăтик-кăтикăн.

- Çăкăр, аш-какай çиетĕп.

- Мĕн ĕçетĕн вара?

- Эпĕ хăйма, сĕт ĕçсе пурăнатăп.

- Апла пулсан, эс ху та питĕ тутлăскер пуль-ха, - тенĕ чăх, мăйне кăшт тăсса. Вăл шĕвĕр сăмсипе таракана сăхса илнĕ те çăтса янă. Кайран, пĕр самантлăх тапранмасăр тăнă хыççăн:

- Мухтанчăк! Хăй вир кĕрпи тĕшне те тăмасть, - тесе пӳртрен тухнă.

## Пĕлетĕр-и эсир?

Слонсене тирпейсĕр теççĕ. Кун пирки çакăн пек каларăш пур: "Чашăк-тирĕк лавккинчи слон пек". Акă мĕн калать Брэм ученăй: "Тĕлĕнмелле, вĕсем лашасем иртме пултарайман ту хырçисем урлă каçаççĕ". Слонсем вăрманта пĕр сас-чĕвсĕр çӳреççĕ, пĕр турат шатăртатса хуçăлнине те илтеймĕн.

* * *

Африкăри страус пăхма айвантарах пек. Мăйĕ вăрăм, пуçĕ пĕчĕк. Чĕпĕсем пусса кăларнă чухне йăви патĕнчен ниçта та каймасть. Вăрăм мăйĕ аякран ан курăнтăр тесе, пуçне пĕксе ларать.

* * *

Пулăсем пирки те каларăш пур: "Пулăсем пек шăпăр" теççĕ. Çакă тĕрĕсех мар вара. Пулăсем пĕр чарăнмасăр сас кăлараççĕ. Çавна эпир ятарласа тунă аппаратура пулăшнипе кăна илтме пултаратпăр.

## Часах КВН пулĕ

Районти Акатуй иртнĕ хыççăн Çамрăксен çурчĕн сцени çинче администрацири çамрăксен пайĕ пуçарнипе ялсенчи çамрăксем хутшăннипе КВН пулать. Районти ялсемпе поселоксенче пурăнакан çамрăксем пĕрремĕш хут хăйсен пултарулăхне кăтартма пултарĕç. Вăййăн расписанине тăваççĕ. "Килти ĕççем" те хатĕрлеççĕ.



Хусанти "Тăвată тутар" пире лайăх тĕслĕх пачĕç. Нурлатра НУРБ тата НГДУ командисем темиçе çул каярах тĕл пулнăччĕ. Ун чухнех вĕсем хăйсем ăнăçлă вылянине кăтартнă.

*Хăна юррисем*

## Пирĕн кăвак лаша пулас çук

*Сирĕн урамăрсем тумхахлă иккен -*
*Тротуарсăр епле çӳретĕр?*
*Эсир çывăх тăвансем пулатăр,*
*Пĕр пымасăр епле тӳсетĕр?*
*Шур юр шурă - çиме, ай, юрамасть,*
*Тăвансене пăрахма юрамасть.*

*Пусмăттăмччĕ сирĕн пусмăр çине,*
*Сĕрсе кайнă витĕр шуратса.*
*Килмĕттĕмччĕ эпĕ сирĕн пата,*
*Пĕр сăмахăр тăрать пĕр ылтăн.*

*Аслă çула пуçăн анаçăм пур,*
*Çуллен пысăк тухăç пултăрччĕ.*

*Сăн-питрен эп хитре пулаймарăм,*
*Ăрăскалпа телей пултăрччĕ.*

*Пирĕн кăвак лаша, ай, пулас çук,*
*Пулсассăн та пуçне ухас çук.*
*Эсир пирĕн пата, ай, пырас çук,*
*Пырсассăн та пăхма пĕлес çук.*

*Хураях вăрманăн, ай, хĕрринче*
*Ним пулмин те пăрçа ани пур.*
*Иртсе çӳренĕ чух кĕрсе тухăр,*
*Ним пулмин те çăкăр-тăвар пур.*

**Пухса йĕркелекенĕ Е.Илюшкина.**

## Çул çинчи инкек

**ГАИ пайĕ çул çинчи черетлĕ автокатастрофăра сынсем вилни çинчен пĕлтерет.**

Инкек Нурлат-Чаллăпуç трасси çинче Тури Нурлат ялĕнчен инçех мар пулнă.

Июнĕн 7-мĕшĕнче 19 сехет те 30 минутра А.Абрамов тытса пыракан ВАЗ-21093 автомашинăпа М.Мунасыпов тытса пыракан ВАЗ-2105 автомашина хире-хирĕç пырса çапăннă.

Çавна пула йывăр аманнипе 8 çынна больницăна илсе кайнă, пассажирсенчен пĕри аманнипе çул çинче инкек пулнă вырăнтах вилсе кайнă.

ГАИ водительсене асăрхаттарать: автомобиль рульне ӳсĕрле ан тытăр. Астăвăр: сире шаннă çынсен чи хакли - пурнăçĕ тата сывлăхĕ сирĕн аллăрта.

# Пулкалать...

Кун-çулсем иртсе пынă май час-часах ача чухнехисем аса килеççĕ. Хăш-пĕр пулăмсене çырса та хурас килет. Астума, манăçăнмасран. Тен, вĕсем манран юлакансене те кăсăклантарĕç.

Çакăн çинчен асилме кирлех те марччĕ пулĕ те... Анчах та кулленхи сăнанинче тĕл пулнипе йĕркелес терĕм.

Ĕç çапла килсе тухнăччĕ.

Ку вăл хамăр ялтах пулса иртрĕ. Ун чухне хресченсем уйрăм хуçалăхпа пурăнатчĕç-ха.

Совет влаçĕн малтанхи çулĕсем.

Ял Советĕнче черет йĕркипе килсерен дежурнăйсем пулатчĕç. Кирлĕ тапхăрта кӳлсе тăратнă лавпах. Ара, яла час-часах тĕрлĕрен уполномоченнăйсем килетчĕç. Киномеханика та аппарачĕсемпе турттармаллаччĕ. Кунта çапла майпа яла пынă пĕр лектор çинчен каласа кăтартам-ха. Ку лектор халăх хушшинче çӳрекен тĕн, тĕшмĕш çинчен ăнлантарса параканни пулчĕ.

Нардом теекен пӳлеме халăх лăках тулчĕ. Эпир те, шĕкĕр-мекĕрсем, малта урайнех вырнаçрăмăр. Паллах, пĕлес килет мĕн çинчен лектор каласа панине.

... Пысăк та йăлтăртатакан куçлăхлă çын уççăн та ăнланмалла каларĕ. Хăйĕн сăмахĕнче çынсем хушшинче çӳрекен тĕшмĕшсем çинче ытларах чарăнса тăчĕ.

- Çын çулне хура кушак татса кайсан, çул ăнмасть тени - тĕшмĕш кăна вăл, - терĕ. - Пушă витреллĕ çынна курни те ниме те пĕлтермест. Вăл йăлăсем кулленхи пурнăçа, çут çанталăк пулăмĕн сăлтавĕсене тĕрĕс пĕлменнинчен тухса кайнă.

Вăл пĕр хĕрарăм еплен "тухатмăш" пулса кайни çинчен каласа пани питĕ интереслентерчĕ.

Лекци пĕтсен те халăх час саланмарĕ. Чылай ыйтусем çине ответлеме тиврĕ лектора.

- Иван Иванчă, тавтапуç сире пире усăллă лекци туса панăшăн, - кăмăлтан тав турĕç итлекенсем.

- Эсĕ, Хĕветĕр, çакăн пек тараватлă çынна хăвăртрах Чăваш Менчине илсе çитĕр, - сĕнчĕ мана ял Совет председателĕ Макçăм пичче.

- Юрать, тăрăшăп.

- Вăхăтра çитесчĕ, - терĕ лектор, çуна çине вырнаçса. Хăйĕн кӳпчек портфельне урисем хушшине хучĕ.

Çул çине тухсанах пирĕн хушăра сăмах тапранчĕ. Вăл эпĕ мĕнле вĕренни, мĕнпе интересленни çинчен тĕпчерĕ.

-Çамрăклах сăвă çырма пуçлани питĕ аван, - ырларĕ вăл. Пĕрер сăввуна кала-ха.

- Акă çуркунне çинчен, - терĕм эпĕ пăртакран:

**Хĕвел хĕртнĕçем хĕртет,**
**Часах çитет çуркунне.**
**Хресчен хатĕрленет**
**Тухмашкăн çуракине.**

Паллах, мана итлекен хăйне килĕшмен вырăнсене тӳрлетме сĕнчĕ.

- Эсĕ Николай Шелепирен, Константин Ивановран çырма вĕрен, - канаш пачĕ юлашкинчен.

* * *

Пирĕн çул уй-хир урлă пулчĕ. Калас пулать, ун чухне анасене çум-курăк пусса кайнă йăрансем уйăрса тăратчĕç. Ара, кашнин харпăр ани пулнă.

Вăрăм ӳссе кайнă курăксем юр айĕнчен пайтахах курăнма пуçланă. Вĕсем хир куянĕшĕн тутлă апат. Çавăнпа та куянĕсем те кунта килкелеççĕ.

Пирĕнпе пĕрле ермешсе пыракан Тузик, ухата йăлипе, кĕл çав йăрансем тăрăх чупкалать. Çулла унта ку вырăнсенче эпĕ темиçе куян та тытнă вĕт.

... Пыра-киле Тузик хулăн сассине кăларса йăран тăрăх вĕçтерсе пычĕ. Курăнах кайрĕ куян та. Тен, хăтăлма хӳтлĕх шыраса вăл пирĕн еннеллех талпăнчĕ.

Эпĕ тилхепене туртса лашана чартăм.

- Вăт шуйттан! - кăшкăрчĕ манпа юнашар ларса пыракан çын - Хăвала лашуна!

- Мĕншĕн?

- Курмастăн-им? Тен, вăл пирĕн çула татма пултарать!

... Эпĕ, чĕнме аптраса, лектор çине ним ăнланмасăр пăхса илтĕм.

- ???

- !!!

**ХĔВ.САВГАЧЕВ.**

## Сăнанинчен

Хĕвел уяра ларсан, уяр пулать.

Хĕвел пĕлĕте ларсан, пĕлĕтлĕ пулать, çанталăк йĕпене каять, çумăр пулать.

Хĕвел хулăн пĕлĕте ларсан, тепĕр куннех çумăр пулать.

Хĕвел анăçĕ хĕрелсен, пĕлĕте ларсан, çумăр пулать.

Хĕвел анăçĕ хĕрелсен, пĕлĕте лармасан, уяр пулать, çил пулать.

Хĕвел аннă чухне пĕлĕт хĕрелсен, тепĕр кун е çумăр, е çил пулать.

Хĕвел анăçĕ хĕвел самаях çӳлте чухне хĕрелсен, çав каçах йĕпе пулать.

Хĕвел аннă вăхăтра пит хĕрлĕ пулсан, йĕпе пулать.

Хĕвел тухĕçĕ хĕрелсен, çумăр пулать /ирхи апатрах çумăр пулать/.

Хĕвел тухнă чух кăна хĕрелсен пĕр-икĕ кунтан çумăр пулать.

Хĕвел тухăçĕ шурă тĕслĕ пулсан, çав куннех çумăр кĕтес пулать.

Çулла хĕвел аннă чухне çурçĕр енчен хĕрелсен, тăм /сывлăм/ ӳкет.

# Пĕлтерӳсем

5х5 калăпăшлă пура сутăнать. Адрес: Советская урамĕ, 195-7, 17.00 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.

* * *

Çыранçи Чаллăри 2 пӳлĕмлĕ хваттере Нурлатри 1 пӳлĕмлĕ хваттерпе хушса тӳлемесĕр улăштаратпăр. Адрес: ЗЯБ поселокĕ, 15/29, 75-мĕш хваттер.

* * *

Ретранслятор патĕнче гараж сутăнать, хаклă мар. Телефон: 2-23-60.

* * *

1997 çулхи сентябрь уйăхĕнче туса кăларнă бортлă, тентлă УАЗ сутатпăр, 4000 километр çӳренĕ, лайăх шайра. Телефон: 2-15-00.

* * *

Вак чул сутатпăр. Адрес: Советская,19.

* * *

Приватизациленĕ 2 пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Ленинградская урамĕнчи 11-мĕш номерлĕ çуртри 18-мĕш хваттерте 17.00 сехетрен пуçласа 20.00 сехетчен ыйтса пĕлме пулать.

* * *

Çуна çинчи гараж тата вырăн сутатпăр. Адрес: Циолковский урамĕ,9-13. Телефон: 5-20-05.

* * *

Сахăр завочĕ патĕнче дача сутăнать. 2-12-72, 5-21-27 номерсемпе 18 сехетрен тытăнса 21 сехетчен шăнкăравламалла.

* * *

Икĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутатпăр. Телефон: 5-22-90.

* * *

Гараж сутăнать (4-мĕш номерлĕ шкул). Телефон: 5-22-19.

* * *

4,2х6,0 калăпăшлă гараж (тасатакан сооруженисем патĕнче) васкавлă сутатпăр. Телефон: 5-26-95.

* * *

1991 çулта туса кăларнă ВАЗ-21053 сутатпăр, 63 пин километр çӳренĕ. Якуркел ялĕнче Николай Васильевич Терентьевран ыйтса пĕлмелле.

* * *

Пĕр пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. 18.00 сехет хыççăн 5-21-01 телефонпа шăнкăравламалла.

* * *

Пĕр пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Козлов урамĕнчи 11-мĕш номерлĕ çуртри 16-мĕш хваттерте ыйтса пĕлмелле.

* * *

К.Маркс урамĕнчи 6-мĕш çуртри 19-мĕш номерлĕ виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Телефон: 5-13-49, хăть хăш вăхăтра та шăнкăравлама пулать.

* * *

Курттăмăн сахăр сутатпăр, 1 килограмĕ 2,800 тенкĕ, хаксене чакарма пултаратпăр. Телефон: 2-17-43.

* * *

Хваттер васкавлă тара илетпĕр. Телефон: 5-36-89.

* * *

Космонавтсен урамĕнчи гараж сутăнать. Телефон: 5-26-02.

* * *

Уйрăм çыннăн стоматологи кабинечĕ: сиплетпĕр, шăл протезĕсем тăватпăр. Адрес: Гиматдинов урамĕ, 112 (НРСУ профилакторийĕ), 8.00 сехетрен пуçласа 17.00 сехетчен ĕçлетпĕр. Ыйтса пĕлмелли тата çырăнмалли телефон: 5-33-89.

* * *

Хĕвелтухăç микрорайонĕнче çурт, газ горелки, "Дон" хуран, Чехословакире туса кăларнă мини-трактор сутатпăр. Телефон: 5-19-31.

* * *

1980 çулта туса кăларнă ВАЗ-21061 сутатпăр. Телефон: 5-26-97.

* * *

ВАЗ-21083 сутăнать. Телефон: 5-32-70.

* * *

Çӳрекен "Москвич-412" запас пайĕсемлĕх сутăнать, хаклă мар. Адрес: Мир урамĕ, 58-1.

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860. 2584.